25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
СЕНТЯБРЬ
18
ЭРНЕКУН
218(6153) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## Чугунçулсене хĕле кĕме хатĕрлесси—паянхи пысăк задача

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтсенче хаяр çапăçусем пынă вăхăтра чугунçул транспортĕнче ĕçлекенсен çĕршывпа фронт умĕнчи ответлăхĕ çавтери ÿсрĕ. Кашни железнодорожникăнах çакна асра тытас пулать: вăл лайăх тата тимлĕн ĕçленинчен фронтра ăнăçу тăвасси килет. Пирĕн транспортăн пиншер çыннисем çак кунсенче хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Малта пыракан железнодорожниксем хăйсен пĕтĕм вăй-халне, мĕнпур пултарулăхне тăван çĕршыва хÿтĕлеме параççĕ. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче железнодорожниксем малти вырăнсенчен пĕрине йышăнаççĕ. Ăмăртура малти вырăна йышăнассишĕн тăрăшса ĕçлекен коллективсем чугунçул çинче нумайлансах пыраççĕ. Çар хатĕрĕсемпе япаласем турттарас енĕпе Правительство тата Çар Командованийĕ панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн аслă наградăсем—орденсем тата медальсем илме тивĕçлĕ пулнă железнодорожниксен йышĕ пысăк.

Анчах халь кашни харпăрхăй лайăх ĕçленипе çеç çитмест, кая юлнисене малтисемпе танлашма пулăшмалла. Железнодорожниксен вăрçăра тăшмана çĕнтерес вăхăта çывхартма тăрăшмалла. Çавăн пек пултăр тесен, чугунçулсем çинче ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва тата анлăрах сарас пулать. Чугунçулсем çинче çарти пек çирĕп дисциплина, çирĕп йĕркелĕх тумалла, тăван çĕршыв умĕнчи ответлăха пĕтĕмпех туйса илсе пур ĕçсене те вăхăтра тата тĕрĕс туса пымалла.

Хĕл çывхарать. Чугунçул хуçалăхне хĕле хатĕрлесе çитермелле. Хĕле хатĕрленес тени вăл—паровозсене, çулсене, депосемпе станцисен çурчĕсене, шыв пăрăхĕсене пурне те юсаса çитермеллине, топливо хатĕрлемеллине, çул çине юр тулнине хирĕç кĕрешме хатĕрленмеллине пĕлтерет.

Чугунçула хĕле кĕме хатĕрлессинче транспорт руководителĕсем пуçаруллă тата хастарлă пулни кирлĕ. Паян эпир чугунçул транспортне хĕле хатĕрлес ыйтупа Канашра пулса иртнĕ канашлăвăн çырăвне пичетлесе кăларатпăр. Çак канашлура чугунçула хĕле хатĕрлес тата хĕллехи вăхăтра тытса усрас енĕпе питех те ырă сĕнÿсем сахал мар пулнă. Хĕллехи вăхăтра чугунçулсене тасатса тăмашкăн колхозсенче боевой дружинăсем туса, колхозсене чугунçулăн уйрăм участокĕсем çумне çирĕплетме, транспорта хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх ирттерме сĕнÿсем панă. Çав сĕнÿсене ырламалла. Анчах çав сĕнÿсене пурнăçа кĕртесси çинчен те манма юрамасть. Транспорт руководителĕсен, партипе совет органĕсен руководителĕсен çав ырă сĕнÿсене пурнăça кĕртес ĕçе организацилемелле.

Канашра пулнă канашлу Хусан чугунçулĕн работникĕсене пурне те хĕллене кĕме кăтартуллăн хатĕрленсе çитме тата çак ĕçе тăван çĕршывпа аслă Сталин хушнă пек пурнăçлама чĕнсе каланă. Ку çырăва железнодорожниксен кашни коллективĕнче, хула совечĕн исполкомĕсенче, ялсовечĕсенче, колхозниксен пухăвĕсенче сÿтсе-явса, мĕнле ĕçсем тумаллине, вĕсене хăçан туса çитермеллине кăтартса татăклă решенисем йышăнас пулать. Чугунçул çинчи руководительсен, партипе совет органĕсен çав решенисем мĕнле пурнăça кĕрсе пынине тĕрĕслесе пымалла.

Çанталăк сивĕтиччен транспорта хĕллехи условисенче пĕр чăрмавсăр ĕçлеме хатĕрлесе çитересси—железнодорожниксен задачи кăна мар, мĕнпур ĕççыннисен пысăк задачи пулса тăрать. Анчах пирĕн республика территорийĕ урлă каçакан чугунçул станцисенчен, депосенчен, дистанцисенчен хăшпĕрисем хĕле кĕме япăх хатĕрленеççĕ-ха. Хĕле хатĕрленме Шупашкар станцинче тытăнман. Шупашкарпа Канаш хушшинчи чугунçула юртан хÿтĕлеме щитсем тата шалчасем çитмеççĕ, юр хырса тасатма кĕреçесем çук, вутă сахал хатĕрленĕ. Çапла вара, чугунçул транспортĕнче çитменлĕхсем сахал мар, вĕсене кĕске вăхăтрах пĕтермелле. Çав çитменлĕхсене пĕтерме железнодорожниксене мĕнпур ĕççыннисем пулăшни кирлĕ.

Железнодорожниксен уйрăмăнах паровозсене тата вагонсене юсаса тата ăшăтса çитересси çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Ку тĕлĕшпе Люблино станцин вагонсем юсакан деповĕн примерĕпе усă курмалла. Çав депора хăйĕнчех запаслă чăссемпе детальсене пухса çĕнетес ĕçе организациленĕ. Çакăн пек туни хĕлле валли детальсен запаслă фондне тума май панă. Железнодорожниксен кашни коллективех çавăн пек тума пултарать. Депосенче, мастерскойсенче усăсăр выртакан кивĕ запасной детальсем сахал мар тупма пулать. Çав чăссемпе детальсене пухса, вĕсене çĕнетсе, паровозсемпе вагонсене юсас ĕçре усă курмалла.

Чугунçул транспорчĕ хĕлле пĕр чăрмавсăр ĕçлесси паровозсем юсавлă пулнинчен тата вĕсене типтерлĕ тыткаланинчен килет. Иртнĕ хĕлле паровозсене тĕплĕн ăшăтман пирки час-часах вĕсене çÿретмелли вăхăтрах юсама тивнĕ, хăшпĕр чухне поездсене илсе кайма паровоз вăхăтра паманни те пулнă. Çавăнпа та паровозсене лайăх юсаса тата ăшăтса çитересси çине уйрăмах хытă çавăрăнса пăхмалла. Çавăн пекех вагонсене те юсаса çитермелле. Вагонсем юсавлипе юсавлă маррине тĕрĕслес ĕçе лайăх организацилемелле. Паровозсемпе вагонсене çийĕнчех юсама чăссемпе детальсем запасра çителĕклĕ пулмалла.

Пирĕн республикăри колхозсем чылайĕшĕ чугунçул валли вутă хатĕрлеме заданисем илнĕ. Çав заданисене вăхăтра тултарас пулать. Касса хатĕрленĕ вутта чугунçулсем патне турттарса хумалла. Ку ĕçре сÿрĕккĕн ĕçлени пулмалла мар, мĕншĕн тесен çынна çăкăр мĕнле кирлĕ, çавăн пекех чугунçула та вутă кирлĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи хĕллехи условисенче ĕçленĕ çĕрте топливăна перекетлесси тата вырăнти топливăна тупса хатĕрлесси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Топливăн кашни килограмне перекетлĕн тыткалас пулать. Чугунçул валли вутă, торф хатĕрлеме мĕнпур вăйсене йăлтах мобилизацилемелле.

Хĕле кĕриччен çулйĕр хуçалăхĕнче кăтартуллă йĕркелĕх тăвас пулать. Юр шăлса лартнине хирĕç кĕрешме щитсем, шалчасем пур участоксем валли те çителĕклĕ таран хатĕрлемелле.

Çĕршывăн чи лайăх железнодорожникĕ ятне илессишĕн çине тăрса кĕрешесси—чугунçул çинче ĕçлекен кашни рабочин, мастерăн, машинистпа помощникĕн, кочегарăн, станци руководителĕпе унăн помощникĕн задачи пулса тăрать.

Хĕллехи условисенче ĕçлеме лайăх хатĕрлесе, чугунçул транспортне пĕр чăрмавсăр тата пĕр тикĕс ĕçлесе тăракан тăвар.

## Хусан чугунçулĕ çывăхĕнчи колхозсенчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене

### Хусан чугунçулĕ çинче ĕçлекен мĕнпур работниксене

Пирĕн тăван çĕршыв хăрушă кунсем пурăнса иртерет. Урса кайнă тăшман, çухатусем тÿснине пăхмасăр, малалла талпăнать, пирĕн ирĕклĕхе юратакан халăха чуралăха кĕртсе ÿкерме хапсăнать. Эпир хамăрăн ирĕклĕ те телейлĕ пурнăçăн тулли правăллă хуçисем пулăпăр-и, пулмăпăр-и, — çак ыйтăва халĕ отечественнăй аслă вăрçăн çапăçу хирĕсенче татса параççĕ. Тăшмана пирĕн чарса лартмалла, ăна хавшатмалла, унтан вара хамăрăн таса çĕр çинчен хăваласа кăларса, гитлерла çĕлен-калтасене тĕппипех пĕтерсе тăкмалла.

Çĕнтерÿ тăвасси мухтавлă Хĕрлĕ Çартан кăна мар килет. Пĕтĕм совет халăхĕн, совет тылĕн пĕтĕм хăватлă çарĕн хĕçпăшалсемпе боеприпассем, тумтирсемпе продовольстви туса кăларассине кунран кунах ÿстерсе пырас пулать. Хĕрлĕ воинсем ирсĕр захватчиксене—юнлă Гитлерăн тискер бандичĕсене татах та вăйлăнрах çапма пултарччăр тесе, чугунçул транспорчĕн совет халăхĕ хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр ĕçлесе туса хатĕрленĕ япаласене фронта хăвăрт тата вăхăтра çитерсе тăрас пулать.

Вăрçă условийĕсенче чугунçул транспорчĕн вырăнĕ питех те вăйлăн ÿсрĕ. Вăл халĕ совет тылĕн пĕтĕм паха пункчĕсене мĕнпур фронтсемпе çыхăнтарса тăрать. Чугунçул магистралĕ тĕрĕс, пĕр чăрмавсăр ĕçленинчен фронта боеприпассем, хĕçпăшалсем, продовольстви вăхăтра çитересси килсе тăрать.

Чугунçул транспорчĕ халĕ хĕле — хăйĕн ĕçĕнчи чи йывăр та чи ответлă тапхăра кĕтсе илме хатĕрленет. Хĕле вăхăтра тата тĕплĕн хатĕрленсе çитме, хĕллехи йывăрлăхсене çĕнтерме ăна пулăшас пулать. Хусан чугунçулĕ çывăхĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен, хуласемпе районсенчи мĕнпур ĕççыннисен железнодорожниксене пулăшса пырас пулать, пĕрле ĕçлесе, вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕлре поездсем хăвăрт тата пĕр чăрмавсăр çÿремелле тăвас пулать. Çил-тăмансем поездсен çулне пÿлсе ан лартчăр, тăшмана çĕмĕрсе тăкма фронта кирлисене пурне те парса тăрассине ан чăрмантарччăр. Çакăншăн тăрăшасси пирĕн пĕрлехи тивĕçлĕх пулса тăрать.

Эпир, Чăваш республикинчи 16 районпа хулари партипе совет организацисен тата колхозсен представителĕсем, Канашпа Улатăр узелĕсенчи тата 5-мĕш, 14-мĕш, 17-мĕш дистанцисенчи железнодорожниксемпе пĕрле Оборонăн Государственный Комитечĕ чугунçулсене хĕле хатĕрлесси çинчен йышăннă постановление сÿтсе-явма пухăнса, хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. Чугунçул администрацийĕ пĕрремĕш хут ыйтсанах поездсене пĕр чăрăнмасăр çÿремелле тăвас тесе колхозсенчен ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ уйăрса памалла.

2. Колхоз территорийĕ витĕр каякан чугунçул километрĕсене кашни колхоз çумне сентябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр çирĕплетсе паратпăр, çулăн кашни метрне лайăх тытса тăрассишĕн, ăна хĕллехи вăхăтра юртан тасатса тăрассишĕн железнодорожниксемпе пĕрле хамăр çине ответлăх илетпĕр. Юра тасатса тăрас тĕлĕшпе ĕçлеме кашни колхоз боевой дружина тăвать тата бригадир уйăрса лартать, çав бригадирăн çул çинчи бригадирсемпе яланах çыхăну тытса тăрас пулать. Юра тасатма боевой дружинăн кăнтăрла та çĕрле те, кирек хăш вăхăтра та, выльăх апачĕ, шăпăрсемпе кĕреçесем илсе тата ăшă тăхăнса тухмалла. Нумай вăхăта пыракан çил-тăмансем пулас пулсан, юра тасатса, турттарса тухас тата щитсене куçарса лартас тĕлĕшпе çав дружинăн талăкĕпех ĕçлемелле. Чугунçул тăрăхĕнчи колхозсем рабочисене ăшăнма çуртсем тата лавсене тăратма килкартисем уйăрса параççĕ.

3. Чугунçулăн Канаш, Улатăр, Шупашкар тата Сергач дистанцийĕсене чугунçул таврашĕнчи территори çинче кирлĕ чухлĕ шалчасем туса хатĕрлеме, дистанцисем валли йывăç кĕреçесем хатĕрлеме, щитсем тумашкăн çапăсем, çыхмалли япаласем хатĕрлеме пулăшмалла.

4. Сентябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 1-мĕшне çити вăхăтра, хĕле хатĕрленме çулйĕр работникĕсене пулăшас тесе, эпир фронтовой вунăкунлăх ирттеретпĕр. Фронтовой вунăкунлăх вăхăтĕнче кашни район колхозниксемпе служащисенчен кашни кунах 50 çынран кая мар уйăрса парать, вĕсем чугунçул çинче ĕçлеме хăйсен инвентарĕсемпе тухаççĕ. Октябрĕн 4-мĕш кунне эпир хĕле хатĕрленес ĕçе вĕçлеме чугунçул линийĕ çине колхозниксемпе железнодорожниксем масăллăн тухмалли кун, чугунçулăн кашни объекчĕ хĕле мĕнле хатĕрленсе çитнине пăхса тухмалли кун тесе пĕлтеретпĕр.

Эпир çак мĕнпур ыйтусемпе Хусан чугунçулĕ çывăхĕнчи колхозсенчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, районсемпе хуласенчи мĕнпур ĕççыннисене, Хусан чугунçулĕ çинчи мĕнпур железнодорожниксене социализмлă ăмăртăва тухма тата пирĕн примера йышăнма чĕнетпĕр.

Социализмлă ăмăртăва анлăнрах сарса ярар, тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн таса тивĕçне пурнăça кĕртме транспорта пулăшар! Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнине Хусан чугунçулне иккĕмĕш хĕл валли кăтартуллăн хатĕрлесе кĕтсе илер, хĕллехи йывăр условисенче пĕр чăрмавсăр ĕçлеме ăна майсем туса парар! Çакă вăл Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă Хĕрлĕ Çарне эпир панă чи лайăх пулăшу пулать, мĕншĕн тесен, транспорта пулăшса, эпир нимĕçсен фашистла варварĕсене çĕмĕрсе тăкма фронта пулăшатпăр, совет çĕрне ылханлă гитлерла чумаран хăвăртрах тасатма хĕрлĕ воинсене пулăшатпăр.

**Çак çыру çине Чăваш республикинчи Улатăр, Йĕпреç, Канаш, Çĕмĕрле, Вăрнар, Вăрмар, Тăвай, Куславкка, Шăхасан, Красноармейски, Çĕрпÿ, Шупашкар, Ишлей районĕсенчи тата Шупашкар, Улатăр, Канаш хулисенчи партипе совет органĕсен тата колхозсен представителĕсем, Улатăрпа Канаш узелĕсен тата 5-мĕш, 14-мĕш, 17-мĕш дистанцисен представителĕсем алă пуснă.**

## Хусан чугунçулне вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕлре ĕçлеме лайăх хатĕрлесе çитерер

### Чугунçул транспортне пулăшни—Хĕрлĕ Çара пулăшни

КАНАШ. (Хамăр корр.). Транспорта вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕлре ĕçлеме хатĕрлес ыйтупа Чăваш АССР-ĕнчи Хусан чугунçулĕ çывăхĕнчи районсемпе хуласен, партипе совет организацийĕсемпе колхозсен представителĕсен канашлăвĕ пулчĕ. Канашлура чугунçулăн Улатăрпа Канаш узелĕсен, 5-мĕш, 14-мĕш тата 17-мĕш дистанцисен представителĕсем пулчĕç.

Канашлура Хусан чугунçулĕн политотдел начальникĕ Григорьев юлташ доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче чугунçул хальхи вăхăтра çĕршыва çар хатĕрĕсем тăвакан промышленноçлă пысăк пунктсемпе, мĕнпур фронтсемпе çыхăнтарса тănине палăртрĕ. Вăрçăри лару-тăру çивĕчленнĕ май çак çулăн пĕлтерĕшĕ питех те пысăкланчĕ. Çавăнпа та чугунçула пĕр тикĕс, пĕр чăрмавсăр ĕçлеттерессипе халĕ кашни ĕççынни интересленмелле. Хĕл çывхарать, транспортшăн йывăрлăхсем пулма пултараççĕ. Хĕллене кĕме лайăх хатĕрленсе çитес пулать, хĕлри йывăрлăхсене çĕнтермелле, фронт мĕн ыйтнине йăлтах вăхăтра çитерсе тăмалла.

Хусан чугунçулĕн работникĕсен умĕнче тăракан задачăсене пурнăça кĕртме Чăваш республики вĕсене сахал мар пулăшать. Халĕ те, хĕллене хатĕрленнĕ вăхăтра та, вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕлре те, Чăваш республики пире тăван çĕршывăн тата аслă Сталинăн заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçлама пулăшса пырассине эпир шанса тăратпăр; республика ĕççыннийĕсем поездсене хăвăрт тата тĕрĕс çÿретме, Гитлер бандисене аркатса тăкмашкăн кирлĕ хатĕрсемпе япаласене вăхăтра фронта тăратма железнодорожниксене пулăшĕç.

Чугунçулăн 5-мĕш дистанцин начальникĕ Светоозерский юлташ, прение тухса каласа, дистанцин çулйĕр хуçалăхне критикленине тĕрĕс тесе йышăнчĕ. Вăл рабочисене кĕтсе илме дистанци хатĕрленсе çитни çинчен, Канаш, Шăхасан тата ытти районсенчи ĕççыннисем пулăшассине кĕтни çинчен каларĕ. Партин Вăрмар райкомĕн секретарĕ Смирнов юлташ чугунçул çинче щитсемпе шалчасене сыхлакансем çуккине палăртрĕ.—5-мĕш дистанцин руководителĕсем партипе совет органĕсемпе начар çыхăнса тăраççĕ, околодоксене çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Пирĕн районри ĕççыннисем железнодорожниксене халиччен те пулăшнă, малашне те пулăшĕç,—тесе каларĕ Смирнов юлташ. Чугунçулăн 14-мĕш дистанцийĕн начальникĕ Макаров юлташ иртнĕ çулта дистанци тăрăхĕнче поезд чарăнса тăни пĕртте пулманнине палăртрĕ. Ĕççыннисем пулăшнипе дистанци вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕлре те çавăн пекех юсавлă пулĕ. Чугунçулăн Юдино отделенин политотдел начальникĕн заместителĕ Кузнецов юлташ иртнĕ çулта юр тулнă пирки поездсем чарăнса тăнă фактсене (Канашпа Шупашкар хушшинчи чугунçул, 5-мĕш дистанци т. ыт. те) палăртать. Чугунçулăн хăш километрне юсавлă тытса усрамаллине кашни колхозник пĕлсе тăтăр, çил-тăвăлсем пуçлансанах колхозниксем кĕреçесемпе шăпăрсем илсе çулсене тасатма пĕр харăс тухчăр. Чугунçулăн 17-мĕш дистанцин начальникĕ Окин юлташ Çĕрпÿ, Красноармейски тата Шăхасан районĕсенчи уйрăм колхозсем чугунçул çинче ĕçлекенсене сахал пулăшнине палăртрĕ. Канашпа Шупашкар хушшинчи чугунçул çинче щитсем тата шалчасем çителĕклĕ мар, тимĕр тата йывăç кĕреçесем çук, вутă сахал хатĕрленĕ, çавăнпа та районсен дистанцие пулăшма халех тытăнмалла. Канаш станцин начальникĕ Галушин юлташ Канаш хулинчи организацисенчен шыв пăркине юсамашкăн, çавна тунипе пассажирсене валли вĕретнĕ шыв çителĕклĕ тытмашкăн пулăшма ыйтрĕ. Партин Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ Котлеев юлташ районри ĕççыннисем хĕллехи вăхăтра железнодорожниксене активлăн пулăшса пырасси çинчен каларĕ, транспорт руководителĕсен чугунçул çине ĕçлеме янă вăйпа тĕрĕс тата туллин усă курма кирлине кăтартса пачĕ. Партин Канаш хула комитечĕн секретарĕ Лисин юлташ тухса калаçнă хыççăн, ВКП(б) Улатăр хула комитечĕн секретарĕ Горбунов юлташ: Улатăрта урам комитечĕсем транспорта пулăшма ятарласа бригадăсем тунă, çав бригадăсем чугунçул дистанци руководителĕсем чĕнсенех ĕçе тухма хатĕр,—тесе каларĕ.

Юлашкинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен секретарĕ Репкин юлташ тухса каларĕ. Вăл çакна палăртрĕ: иртнĕ хĕлре чугунçул транспорчĕшĕн йывăрлăхсем пулчĕç. Станцисем, депосем, çул дистанцийĕсем нумайĕшĕ хĕллене хатĕрленсе çитмен пулнă. Халĕ транспорт руководителĕсен пурин те вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕлре ĕçлеме пур енчен те вăхăтра хатĕрленсе çитме тăрăшмалла. Партипе правительство кăтартнă срокра хĕллене кĕме хатĕрленсе çитмешкĕн хатĕрленес ĕçе хăвăрт туса пырас пулать.

Железнодорожниксен çывăхри территориальнăй организацисенчен пулăшу ыйтас пулать. Çав вăхăтрах территориальнăй организацисен железнодорожниксем вĕсенчен пулăшу ыйтассине кĕтсе тăма юрамасть, вĕсене тăтăшах пулăшса тămалла. Канашлура чугунçул юсассипе ĕçлекен боевой дружинăсем тăвас, колхозсене çулăн пĕр-пĕр километрĕ çумне çирĕплетес, транспорта хĕле кĕме хатĕрлесе çитерессипе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх ирттерес ыйтусене пуçарчĕç, çав ыйтусем çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Чугунçулăн пур участокĕсене те хĕллене лайăх хатĕрлесе çитерес ĕç—эпир пурте тумалли ĕç. Чугунçул хĕллехи условисенче хăйĕн тăван çĕршыв тата фронт умĕнчи ĕçне лайăх туса пыма пултартăр. Çак ыйтусене чугунçул çывăхĕнчи ялсовечĕсемпе колхозсен председателĕсен канашлăвĕсенче, çавăн пекех колхозниксен пухăвĕсенче сÿтсе-явмалла. Станцисене, депосене тата çул дистанцийĕсене хĕле кĕме хатĕрлес ĕç мĕнле пынине парти органĕсен контрольлесе тăрас пулать, чугунçул транспорчĕ, сăмахран, Хусан чугунçулĕ, халĕ мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен ĕççыннисене ăнлантарса парас ĕçе анлă сармалла. Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕл чугунçул транспорчĕшĕн пысăк тĕрĕслÿ пулса тăрать. Çак тĕрĕслÿ витĕр чыслăн тухасси вăл—железнодорожниксен кăна мар, Чăваш республикинчи мĕнпур ĕççыннисен хисеплĕ ĕçĕ.

Канашлу пĕр шухăшлă пулса Хусан чугунçулĕ çывăхĕнчи колхозниксемпе ĕççыннисем, чугунçул работникĕсем патне хĕллене кĕме лайăх хатĕрленме тата çак ĕçе тăван çĕршывпа аслă Сталин хушнă пек пурнăçлама чĕнсе çыру яма йышăнчĕ.

## Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

ШĂХАСАН. (Телефонпа). Фронтра çĕнтерÿ тăвасси тылри çынсенчен те килнине асра тытса, районри ĕççыннисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 12-мĕшне çитиччен Хĕрлĕ Çар валли 48 мăшăр çăматă, 87 мăшăр çăм алшипи, 36 мăшăр çăм носки, 17 ăшă кĕпе, мулахай, 25 курткăпа шăлавар, 100 алшипи, 18 мăшăр тиртен çĕленĕ алса, алшăлли, 325 тир, 146 килограмм çăм тата ытти япаласем пачĕç. «Березовка» колхозра, Мухин юлташ ăшă япаласем пухакан комисси председателĕ пулса ĕçленĕ çĕрте, ку ĕç аван пулса пырать. Унта 1 кĕрĕк пиншак, 45 тир, 7 мăшăр çăматă, 8 мăшăр çăм алшипи, 3 мулахай пуçтарнă.

Анчах та хăшпĕр колхозсенче ăшă япаласем пухас ĕçе пуçăнман та. Кусен шутне «Звезда» колхоз (комисси председателĕ Яшманов), «Соревнование» (комисси председателĕ Матвеев), «Красный трактор» (комисси председателĕ Иванов), Туçи Çармăс ялсоветĕнчи «Победа» (комисси председателĕ Тимофеев), Калинин ячĕпе тăракан колхоз (комисси председателĕ Яковлев) кĕреççĕ. Çак колхозсенче кăсал нимĕнле япала та пухман. Ăшă тумтирсем пухас ĕç çине çавсем пек пăхма юрамасть.

**МАТВЕЕВ,**
ВКП(б) Шăхасан райкомĕн секретарĕ.

КУКЕÇ. Юлашки уйăх çурă хушшинче районĕпе сурăх тирĕсем 310, мулахайсем 152, кĕрĕк пиншаксем 18, çăм носкисем 18 мăшăр, çăм 27 килограмм, çăматăсем 4 мăшăр, портянкăсем 28 мăшăр, çăм алшиписем 13 мăшăр, ăшă кĕпе-йĕмсем 12, одеялăсем 6, пир 101 метр пухса районри складра хывнă.

Иккассинчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхозра фронтри лару-тăру çинчен калаçусем ирттернĕ хыççăн колхозниксем совет воинĕсем валли 69 тир, 2 кĕрĕк пиншак, 3 мулахай, 2 килограмм çăм пухса панă. Сталин ячĕпе тăракан колхозра 26 тир, 1 кĕрĕк пиншак, 2,2 килограмм çăм пухнă. «Правда» колхозăн членĕсем 33 тир, 4 мулахай, 7 кĕпе, 4,6 килограмм çăм панă.

Çав хушăрах хăшпĕр колхозсемпе учрежденисенче вара хальхи вăхăт ăшă тумтирсем хатĕрлемелли кĕрÿллĕ вăхăт пулса тănине асра тытмаççĕ, ăшă япаласем пухас ĕçе тивĕçлипе туса пымаççĕ. Засодской, Шăнкас, Паçпак ялсоветĕнчи колхозсем çак уйăх çурă хушшинче пĕр япала та пухса паман.

Сĕнтял ялсоветĕнчи колхозсенче те çак ĕç начар пырать. Кунти территориальнăй парторганизаци (секретарĕ Воинов юлташ) ăшă япаласем пухасси çинчен пухусенче калаçса ирттернисĕр пуçне нимĕнле конкретнăй ĕç те туман.

**Т. ЛОГИНОВ.**

## Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

### Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртури малтанхи результатсем

КАНАШ, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Фронта вăйлăн пулăшас тĕлĕшпе Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарма Владимир Ильич ячĕпе тăракан 70-мĕш номерлĕ заводăн рабочийĕсемпе работницисем, инженерла-техникла работниксем тата служащисем чĕнсе каланине Канаш хулинчи промышленноçпа транспорт предприятийĕсенче, промысла артелĕсенче, шкулсенче сÿтсе-яваççĕ.

Ĕнер Канашри вагонсем юсакан заводри васкавлă заказсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлекен пĕр участокри (начальникĕ И. Поздняков юлташ) рабочисен пухăвĕ пулса иртнĕ. Çак пухура участок коллективĕ производствăн сентябрь уйăхĕнчи планне сентябрĕн 25-мĕш тĕлне тултарма обязательство илнĕ. Электросварщик Григорьев юлташ производствăра яланах фронтри пек ĕçлеме сăмах панă.

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче Сокольский юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри Егорушкинăн хĕрлĕ ялавлă сменинче рабочисен пухăвĕ пулнă. Рабочисем, Владимир Ильич ячĕпе тăракан завод коллективĕн чĕнĕвне ырласа, хăйсем çине сменăн сентябрь уйăхĕнчи заданине 110 процент пурнăçлама, октябрь уйăхĕнче плана ирттерсе тултарма, ноябрь уйăхĕнчи малтанхи ултă кунри задание октябрь уйăхĕнчех пурнăça кĕртме, ĕç тухăçлăхне 4 процент ÿстерме, инструментсемпе типтерлĕн усă курма, çĕнĕ кадрсене вунă çын вĕрентсе хатĕрлеме обязательствăсем илнĕ. Çак смена заводри ытти сменăсене, бригадăсене, цехсене октябрь уявĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе çыру çырнă. Çак çырăва заводри хаçатра пичетлесе кăлараççĕ.

Сменăри рабочисем чылайĕшĕсем производствăра тăрăшса ĕçлеççĕ. Ĕнер ВКП(б) членĕ слесарь Пучмин нормăна 361 процент, слесарь Баринов—253 процент, слесарь Перхильев—563 процент, слесарь Касин—438 процент пурнăça кĕртнĕ. Çакăн пек ĕçлекенсем ытти сменăсенче те пур. Абрамова ĕнер нормăна 162 процент тултарнă.

Заводра ĕç тухăçлăхĕ ÿссех пырать.

**П. НИКОЛАЕВ.**

### ЗАВОД ĂМĂРТĂВА ТУХРĔ

Владимир Ильич ячĕпе тăракан 70-мĕш номерлĕ заводăн коллективĕ фронта вăйлăн пулăшас тĕлĕшпе Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва тухма чĕннине сÿтсе-явнă хыççăн, Черничкин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем, служащисем государствăн çулталăклăх планне Октябрьти аслă революци уявĕ тĕлне тултарма, виççĕмĕш кварталти задание 25 процент ирттерсе пурнăça кĕртме, сентябрь уйăхĕнче плана 100 процент, октябрьте—10 процент ирттерсе тултарма обязательствăсем илнĕ.

Çавăнпа пĕрлех завод коллективĕ пĕр Халăх Комиссариачĕн заказĕсене туса çитерес тĕлĕшпе графика срок çитиччĕнех пурнăçлама, пĕр йышши япаласене туса кăларассипе сентябрь уйăхĕнче задание тултарма, ку япаласене туса кăларассипе август уйăхĕнчи парăма татма пулнă.

Завод коллективĕ ĕç тухăçлăхне ÿстерес енĕпе задание пурнăça кĕртме, рационализаторла сĕнÿсене 25-рен кая мар пухма, нормăсене тултарайман рабочисен йышне август уйăхĕнчипе танлаштарсан икĕ хут чакарма, брак тунă пирки пулакан тăкака августра пулнинчен 25 процент чакарма, çĕнĕ рабочисене, кăçалхи сентябрь уйăхĕнче ĕçе илнисене пурне те минимум шкулĕнчен вĕрентсе кăларма, стахановла шкулсенче 100 çын вĕрентсе хатĕрлеме, ăсталăха ÿстермелли курсран 50 çын вĕрентсе кăларма сăмах панă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва сарас ыйтупа заводри пур цехсемпе сменăсенче те пухусем тата митингсем пулса иртнĕ.

## ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариатĕнче

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе ССР Союзĕн Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ чугунçулсен, депосен, станцăсен, дистанцисен, предприятисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулти август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ август уйăхĕнче ăмăртура Канашри вагонсем юсакан завод (начальникĕ Поздняков, партбюро секретарĕ Сорокин, завком председателĕ Мосенко юлташсем) мала тухса иккĕмĕш вырăн йышăннине палăртнă.

ССР Союзĕн Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне çав заводрах хăвармалла тунă.

# Совет Информаци Бюровĕнчен

## Сентябрĕн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче тата Моздок районĕнче хаяррăн çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сентябрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкĕпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 70 автомашинине çити, боеприпассем тиенĕ 20 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 13 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 5 ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче пирĕн войскăсем хĕрӳллĕн çапăçнă. Пĕр участокра противникăн танкĕсемпе автоматчикĕсен уйрăм групписем пирĕн оборонăна савалланса кĕнĕ. Вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă, çав çапăçусенче совет войскисем тăракан вырăна кĕрсе кайнă гитлеровецсене вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра Н-ски соединенин боецĕсем наступлени тăвакан противникпа çапăçса, румын пехотин пĕр полкне аркатса тăкнă. Гвардии миномет чаçĕ, Дорофеев юлташ ертсе пынипе, нимĕç пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă, 13 танк, 22 автомашина çунтарса янă тата противникăн артиллерийĕпе миномечĕсен темиçе батарейине пусарса лартнă. Нимĕçсем хăйсен вăйсăрланса юлнă дивизийĕсене пулăшмашкăн çĕнĕ резервсем иле-иле пыраççĕ. Пирĕн чаçсем çав резервсене хирĕç хаяррăн çапăçаççĕ.

Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 32 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн войскăсем юханшывăн кăнтăр енче противникăн группировкине пыра-пыра çапнă. Нимĕçсем темиçе хутчен контратакăсем тунă, çав контратакăсене противника пысăк çухатусем тӳстерсе сирсе янă. Совет чаçĕсем малалла куçса халăх пурăнакан пĕр пункта, тактика тĕлĕшĕнчен паха пункт пулса тăраканскере, тытса илнĕ. Моздокран хĕвелтухăçнерехре противникăн пехотипе 80 танкĕ пирĕн позицисене атакăланă. Н-ски соединенин боецĕсем противникăн войскисен пур атакисене те сирсе пăрахнă. Нимĕçсен 30 танкне çити персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Синявино районĕнче пирĕн чаçсем, гитлеровецсем вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, противникăн çирĕплетнĕ пунктне тытса илнĕ. Рогожкин юлташ ертсе пыракан артиллери расчечĕн

артиллерисчĕсем нимĕçсен 4 танкне персе çĕмĕрнĕ. Сапер-разведчик Грищенко юлташ кĕске вăхăтра нимĕçсен танксене тата пехотăна пĕтерме хунă 120 минине тупса сиенсĕрлетнĕ. Хастарлă боец нимĕçсен укреплениĕ патне шуса пынă та офицера персе вĕлернĕ, унтан дзота сирпĕнтерсе янă. Тăшманăн оборонине шалалла кĕрсе кайса, Грищенко юлташ 27 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронежран кăнтăртарахра Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн атакине сирсе янă, нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра икĕ кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн пĕр часть нимĕçсенчен 2 оруди, 3 миномет, 45 пулемет, 200 винтовка ытла тата 14 автомашина тытса илнĕ. Çав вăхăт хушшинчех противникăн 500 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 377-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 377-мĕш артиллери полкĕнчен хăй ирĕкĕпе тыткăна парăннă салтак Франц Г. çапла каласа панă: «Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене тата граждăнла халăха хаяррăн тыткаланине эпĕ хам курнă. Нумаях пулмасть марш вăхăтĕнче пĕр оруди пылчăка кĕрсе ларчĕ. Батарея командирĕ хушнипе тыткăнри аманнă пĕр ушкăн красноармееца хăваласа пынă та вĕсене çав орудие туртса кăларма хушнă. Аманнине тата юн кайнине пула халсăрланса юлнă красноармеецсем нимĕн те тума пултарайман. Вара вахмистр Шмидеке вырăссене нагайкăпа вĕлерес пек хĕненĕ. Слобода ялĕнче ӳсĕр салтаксем 5 хресчен çемьине штыксемпе чике-чике вĕлернĕ. Эпĕ, çав пӳртсене кĕрсе, ашшĕ-амăшĕсемпе ачисене чиксе шăтарса сăнран янă виллисене куртăм. Никольское ялĕнче пĕр ватă хресчене вăл офицер умĕнче хăйĕн çĕлĕкне хывманшăн персе вĕлернĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Германи халăхне тăрантармашкăн хăйсем чуралантарнă çĕршывсенчи хресченсен пĕтĕм продовольствине çаратса илеççĕ. Брабант провинцинче (Бельги) гитлерла чиновниксем тырă паманшăн темиçе пин хресчене штраф тӳлеттернĕ тата суда панă. Нумай хресчене тытса хупнă, хуçалăхĕсене пĕтерсе лартнă. Нимĕç влаçĕсем ялсенче массăллăн ухтарса, çӳреççĕ, тупнă тырăсене пĕтĕмпех вăйпа туртса илеççĕ. Çавăн пек çаратнине ответлесе, Жамблу сывăхĕнчи хресченсем генератора аркатса тăкнă, çапман тырра çунтарса янă. Рашфор районĕнче хресченсем тырă тытса илме пынă çынсемпе хĕçпăшал тытса тытăçса илнĕ.

## Сентябрĕн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче тата Моздок районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче противникăн автоматчикĕсем, танксем пулăшса пынипе, Н-ски стрелковăй часть хӳтĕлекен позицисене атакăланă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен атакине сирсе янă. Вĕсем противотанковăй пăшалсемпе, гранатăсемпе тата çунакан хутăш тултарнă бутылкăсемпе нимĕçсен 6 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Противник автоматчикĕсен отрядне çавăрса илнĕ те пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра вăйлă çапăçусенче, темиçе хутчен штык вĕççĕн тăрса тытăçнипе вĕçленнĕскерсенче, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотин атакисене сирсе янă. Пĕр участокра кăна нимĕçсен 11 танкне тата 250 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçри артиллеристсем, пĕр çĕре пухăнса тăнă противник çине сасартăк вăйлăн пеме тытăнса, виçĕ бронемашина тата боеприпассем тиенĕ 12 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Моздок районĕнче пирĕн гварди чаçĕ нимĕçсенчен пĕр танк, 2 оруди, 4 автомашина, 28 пулемет, 33 ещĕк мина тата штабăн документсем тиенĕ машинине тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем противникăн çирĕплетнĕ рубежне тытса илнĕ, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 900 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери 10 блиндажа тата 26 дзота çĕмĕрнĕ, 5 оруди, 14 пулемет тата минометсен 4 батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 10-мĕш мотострелковăй полкĕн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-фельдфебель Алоиз Игель çапла каласа панă: пĕр уйăх хушшинче 5-мĕш ротăран 46 çын вилнĕ е аманнă. Пире икĕ хутчен çынсем хушса пачĕç: юлашки çапăçура вырăссем пирĕн позицисене атакăларĕç, рота командирĕ Шуберт лейтенант юлашки çын юлмиччен тытăнса тăма хушрĕ. Анчах сывăхра вырăс танкĕсем курăнса кайсан, Шуберт хăраса ӳкрĕ те чи малтан тарчĕ. Танксем пирĕн позицисем патне çитсен, темиçе салтак окопсенчен тухрĕç те аллисене çĕклерĕç. Эпĕ те окопран тухрăм та, алăсене çĕклесе, салтаксене команда патăм: «Тухăр, пăрахăр пăшалăрсене», терĕм. Пирĕн ротăри 60 салтак тыткăна парăнчĕç. Пĕри кăна тарма тытăнчĕ те, ăна персе вĕлерчĕç.

* * *

Венгерецсен 7-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 4-мĕш полкăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Георге Трифу çапла каласа панă: «Çуркунне, эпир фронта кайнă чухне, офицерсем пире—6 уйăхран сире улăштараççĕ, терĕç. Хăшпĕр салтаксем, нумаях та пулмасть-ха, часах Венгрие таврăнатпăр тесе шухăшлатчĕç. Халĕ ĕнтĕ никам та çавăн пек шанса тăмасть. Салтаксем хуйхăрса çапла калаççĕ: «Пире час улăштарĕç ĕнтĕ, мĕншĕн тесен ротăран мĕнпурĕ те 20 çын çеç тăрса юлнă. Гитлер ĕнтĕ вилнисем вырăнне çĕнĕ Венгри салтакĕсене яма хушĕ», теççĕ.

* * *

Парижра халăх нимĕçсен фашистла оккупанчĕсемпе кашни кун тенĕ пекех тытăçса илет. Нумаях пулмасть Парижăн пĕр урамĕнче продовольстви магазинĕ патĕнче черетре тăнă хĕрарăмсем нимĕç офицерĕсем ларса пыракан автомобиле тытса чарнă та офицерсенчен хĕçпăшалĕсене тытса илсе, вĕсене хĕнесе пĕтернĕ. Париж сывăхĕнче нимĕçсем пир-авăр фабрикине хупнă та рабочисене—сирĕн виçĕ кун хушшинче Германие тухса каймалла, тесе каланă. Фабрикăри рабочисемпе работницăсем—эпир [illegible] та каймастпăр, тесе каланă, вара, протестлесе, хатĕр продукцин складне çунтарса янă.

## Ирĕке кăларнă районсенче

Смоленск облаçĕн нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районĕсенче вырăнти промышленность вăйлăн ӳссе пырать. Çĕнĕ предприятисем уçăлаççĕ. Козельски районра спичкăсем тума тытăннă. Тепĕр районра та пысăках мар спичка фабрики тăваççĕ.

Куйбышев ячĕпе тăракан кĕленче завочĕ хăйĕн тĕп программине пурнăçланисĕр пуçне тата стакансем, графинсем тата ытти кантăк савăтсем тăвать. Ку завода нимĕçсем çĕмĕрнĕ пулнă, халĕ ăна юсанă, вăл ĕнтĕ халăха тĕрлĕ таварсем туса парать. Нумаях пулмасть вăл пуçласа чӳрече кантăкĕ тума тытăннă. (ТАСС).

## Республикăри колхозсенче тырă вырас, кĕлте кӳрес, авăн çапас, çĕрулми кăларас ĕçсем сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне мĕнле пулса пынине кăтартакан

## СВОДКА

### (ПРОЦЕНТПА)

| Районсем | Тырă вырнă | Кĕрпе тумалли тата пăрçа йышши тырăсене вырнă | Кĕлте кӳнĕ | Авăн çапнă | Çĕрулми кăларнă |
|---|---|---|---|---|---|
| Улатăр | 100 | 69,2 | 76,3 | 39,1 | 22,3 |
| Элĕк | 100 | 100 | 84,5 | 46,4 | 53,0 |
| Вăрнар | 100 | 99,9 | 85,4 | 43,1 | 28,1 |
| Йĕпреç | 100 | 92,3 | 79,6 | 44,7 | 13,2 |
| Йшлей | 100 | 99,4 | 87,8 | 50,6 | 41,1 |
| Калинински | 100 | 100 | 98,8 | 34,3 | 31,8 |
| Канаш | 100 | 90,4 | 94,5 | 47,5 | 42,5 |
| Комсомольски | 100 | 92,6 | 89,6 | 44,5 | 22,3 |
| Сĕнтĕрвăрри | 100 | 93,2 | 83,8 | 45,1 | 30,1 |
| Октябрьски | 100 | 99,1 | 88,9 | 44,1 | 23,7 |
| Первомайски | 100 | 92,4 | 64,7 | 43,8 | 11,1 |
| Советски | 100 | 100 | 96,6 | 37,5 | 44,1 |
| Сĕнтĕр | 100 | 99,7 | 94,9 | 30,4 | 24,3 |
| Вăрмар | 100 | 86,9 | 85,2 | 53,6 | 33,2 |
| Çĕрпӳ | 100 | 100 | 90,4 | 46,0 | 36,4 |
| Шупашкар | 100 | 100 | 93,2 | 58,9 | 47,9 |
| Чкаловски | 100 | 84,3 | 81,9 | 37,2 | 28,6 |
| Шăмăршă | 100 | 99,9 | 100 | 48,6 | 18,5 |
| Шăхасан | 100 | 98,6 | 84,4 | 45,3 | 44,8 |
| Çĕмĕрле | 100 | 94,6 | 98,2 | 53,5 | 31,1 |
| Етĕрне | 100 | 73,2 | 97,9 | 47,4 | 23,2 |
| Елчĕк | 100 | 69,4 | 81,1 | 35,7 | 39,1 |
| Хĕрлĕ Чутай | 100 | 94,2 | 72,1 | 39,4 | 43,1 |
| Красноармейски | 100 | 97,4 | 91,9 | 75,1 | 8,1 |
| Куславкка | 99,1 | 83,7 | 69,5 | 48,7 | 20,1 |
| Кувакино | 98,0 | 76,3 | 84,0 | 46,9 | 16,5 |
| Пăрачкав | 96,9 | 90,5 | 98,4 | 55,2 | 4,2 |
| Тăвай | 99,8 | 79,7 | 87,8 | 40,3 | 64,5 |
| Шупашкар хули | 93,8 | 100 | 93,8 | 39,0 | 41,5 |
| ЧАССР тăрăх | 99,7 | 91,3 | 87,2 | 46,5 | 31,3 |
| Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне пулнă | 99,4 | 82,4 | 75,2 | 41,4 | 16,3 |

## Авăн çапас хăвăртлăхсене ӳстермелле

ВĂРНАР. Районри пур колхозсем те тырă вырса пĕтернĕ, халĕ авăн çапас ĕç хĕрӳллĕн пырать. Нумай колхозсенче кĕлтесене капана хывассипе авăн çапас ĕçсене кунĕн-çĕрĕн туса пыраççĕ. Иртеменкассинчи «Победа» колхозра фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра кĕлтесене пĕтĕмпех капана хывса пĕтернĕ. Тырă вырнă чухне О. Константинова, А. Орлова, К. Сергеева колхозницăсем икшер кун пĕр татăлмасăр ĕçленĕ, кулленхи нормăсене икшер хут ирттерсе тултарса пынă. Çавăн пекех халĕ те, авăн çапнă çĕрте, колхозницăсем икшер-виçшер смена хушши ĕçлеççĕ. Колхоз авăна пĕтĕмĕшпех çапса пĕтернĕ.

Тырпулсене пухса кĕртес тата государствăна тырă парас тĕлĕшпе Çĕн Алтăшри «Волга» колхоз та паха тĕслĕхсем кăтартать. Колхоз çак кунсенче кĕлтесене капана хывса пĕтерет, 1942 çулта обязательнăй йĕркепе государствăна памалли тырра тата МТС ĕçленĕшĕн тухакан натуроплатăна пĕтĕмĕшпех парса татнă, Хĕрлĕ Çар фондне 102 центнер тырă хывнă.

Анăçлă пулнă тырпула хăвăртрах çапса пуçтарса, государство умĕнчи обязательствăсене хăвăртрах парса татас ĕçре юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Район сентябрĕн 15-мĕш тĕлне кĕлтесене капана хывас тата авăн çапас ĕçсене 50-шар процент çеç пурнăçланă. Уйрăмăнах Хапăсри тата Кушлавăшри колхозсем кая юлса пыраççĕ. Хапăс колхозĕнче халĕ те: «Тырра хĕлле те çапăпăр-ха», тесе лараççĕ. Кушлавăш колхозĕнче государствăна тырă памалли графика пачах пăхăнса пымаççĕ. Колхоз председателĕ Филиппов çĕнĕ тырра государствăна паричченех колхозниксене 200 пăт ытла валеçсе панă.

Çавăн пекех Кĕçĕн Кипекри «Память Ленина», Пăваялĕнчи «Большевик» колхозсем те авăн çапассипе питех те вăраха юлнă, туртăм вăйĕпе кирлĕ пек усă курмаççĕ, кĕлтесене алăпа йăтса капана хывассине хакламаççĕ. «Память Ленина» колхоз государство умĕнчи тырă обязательствисене 6,93 процент çеç пурнăçланă.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

### ШКУЛ АЧИСЕМ 670 КИЛОГРАММ ПУЧАХ ПУХНĂ

Красноармейски районри Чутайкассинчи пуçламĕш шкулта вĕренекен ачасем вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпах уроксем хыççăн колхозсен уйĕсенче пучах пухаççĕ. Ку ĕçре вĕсене Волкова тата Владимирова учительницăсем ертсе пыраççĕ.

Çапла, вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа вĕсем колхозсене 670 килограмм пучах пухса панă.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

### Государствăна—çĕрулми

ИШЛЕИ. (Телефонпа). Сталин ячĕпе тăракан колхозри И. Ериванов, Е. Смирнова юлташсем ертсе пыракан бригадăсем çурхи тырăсене ăнăçлăн вырса пуçтарса, çĕрулми кăларма тытăнчĕç. Сентябрĕн 9-мĕшĕ тĕлне çак икĕ бригада 6 гектар çинчи çĕрулмине кăларса, государствăна 20 центнер çĕрулми леçсе панă.

П. ЛУКИН.

## Сăрт-ту рубежĕсенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ.). Кавказ тăвĕсем патне çитсе, противник сăрттусем хушшинчи çулсене çийĕнчех штурмпа тытса илсе, Хура тинĕс хĕррине тухма шутланă. Çав ĕмĕте пурнăçа кĕртес тесе, нимĕçсен командованийĕ унта темиçе горно-егерьски дивизи тата ытти специальнăй чаçсем илсе пынă. Пирĕн войскăсем • тусем хушшинче оборона йышăнса, тăшмана çирĕп отпор панă. Н-ски гвардейски соединени йышăнса тăракан участокра уйрăмах хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Çав соединение хирĕç нимĕçсем егерьсен суйласа илнĕ чаçĕсене тата СС отрячĕсене янă.

Фашистсем кунта нумай мар вăхăт хушшинче пирĕн оборонăн линине татса кĕрсе, тусем хушшинчи питех те паха çул çине тухма темиçе хутчен те хаяррăн атакăласа пăхнă. Çав рубежа хӳтĕлекенсем, тăшман атака тума пухăнса тăрассине кĕтсе илнĕ те, унтан йывăр минометсенчен вăйлăн пеме тытăннă. Вăйлă вут-çулăм тăкнипе тăшмана нимĕн те тавçăрса илме памасăр, гвардеецсем контратака пуçласа янă. Высота патне пымалли вырăнсенче хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 400 виллине яхăн пăрахса хăварса, гитлеровецсем малтанхи позицисем патне каялла чакнă.

Тепĕр темиçе кунран фашистсем çĕнĕ наступлени тума хăтланнă. Ку хутра тăшман çапăçăва авиаципе артиллерие кĕртсе янă. Авиаципе массăллăн пырса тапăнса тата артиллерирен перхсе хатĕрленнĕ хыççăн эсэсовецсем, пирĕн чаçсен хирĕç тăрас вăй-хăватне хавшатнă тесе шутласа, атакăна кĕрсе кайнă. Гвардеецсем тăшмана пур тĕрлĕ хĕçпăшалсенчен те аркатмаллах персе кĕтсе илнĕ. Сăрт-туллă тата вăрманлă вырăна лайăх пĕлсе тăрса, пирĕн чаçсем фашистсене хирĕç хăюллăн çапăçăва тухнă.

Кунти хаяр çапăçусем виçĕ талăк хушши пынă. Нимĕçсен нумай салтакĕсем вилсе, аманса пĕтнĕ, кунсăр пуçне, вĕсенне 7 танк, артиллерин 5 батарейине тата минометсен 4 батарейине, пехота ларса пыракан тата çар грузĕсем тиенĕ 20 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Çакăнпа пĕрлех гвардеецсем 202 ручной пулемет, 2 раци, винтовкăсем нумай, телефон аппарачĕсем тытса илнĕ. Пирĕн чаçсем пĕр утăм та каялла чакман, хăйсем йышăнса тăракан рубежсенче татах та ытларах çирĕплеисе ларнă.

Н-ски часть тăшмана чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк сиен кӳнĕ. Сăрт-ту рубежĕшĕн пыракан вăйлă çапăçусенче çав чаçăн боецĕсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене темиçе пин çынна вĕлерсе пĕтернĕ, пехота ларса пыракан тата грузсем тиенĕ 150 автомашинăна, орудисемпе минометсем нумай пĕтерсе тăкнă. Çирĕп отпор панипе пысăк çухатусем тӳссе, нимĕçсен ирĕксĕрех каялла чакса оборона йышăнма лекнĕ. Анчах пирĕн чаçсем пуçарулăха хăйсен аллине илсе, нимĕçсене кăнтăрла та, çĕрле те канăç памаççĕ.

Нимĕçсен батальонĕ вырнаçса тăракан высоташăн хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăнă. Мусаков капитанăн боецĕсем высотана тусем хушшинчи сукмаксемпе аякран кайса çавăрса илнĕ те, высотана мĕнпур енчен штурмлама тытăннă. Каç умĕн ăна тăшманран пĕтĕмĕшпех тасатнă. Вилнисем кăна тăшманăн 250 çынран кая мар выртса юлнă. Подразделени продуктсен обозне, винтовкăсемпе автоматсем нумай тытса илнĕ.

Тусем хушшинчи хаяр çапăçусенче пирĕн боецсем пысăк тавçăрулăхпа чеелĕх кăтартаççĕ. Акă вĕсенчен пĕри. Икĕ высотаран çапса антарнă нимĕçсем васкасах ту хушшинелле чакса пынă. Çакă вăл вут-çулăм миххинчен хăтăлса тухмалли пĕртен пĕр çул пулнă.

— Халех эпир çав миххе хамăрăн пулеметпа çыхса хуратпăр,—тенĕ сержант Семен Нищенко хăйĕн помощникне, Абашина.

Çав ту хушши патне хăвăрттăн пырса çитсе, вĕсем пĕр хӳтĕ вырăна станковăй пулемет вырнаçтарса лартнă. Таракан нимĕçсем курăнса кайсан, совет пулеметчикĕсем пеме тытăннă. Шиклeнсе ӳкнĕ гитлеровецсем унталла та кунталла чупма пуçланă. Хыçалтан вĕсене пирĕн пехотинецсем хĕссе пынă, малтан пулемет çапнă. Çав çапăçура нимĕçсен «Горная роза» ятлă дивизийĕн батальонне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

И. ЛАПОНОГОВ.

# Ют çĕршывсенче

## Совет авиацийĕ Венгрие тапăнни çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, совет авиацийĕ Будапешта тапăннă хыççăн пĕтĕм Венгрире чӳречесене тĕттĕмлетме тытăннă. Венгрин информаци бюровĕ совет авиацийĕ кӳнĕ сиенсене пĕчĕклетсе кăтартма тăрăшеть, анчах та чăннипе ĕç мĕнле пулнине лăйăх пĕлсе тăракан халăха çавăн пек лăплантарма тăрăшни ăнăçуллă пулмасть.

Будапештран килнĕ çынсем каланă тăрăх, совет авиацийĕ çав хулана малтанхи хут вăйлăн тапăннă чухне чугунçул станцийĕ хытă сиенленнĕ. Самолетсем тапăннă хыççăн çынсем пĕтĕм çĕршыв пек аптăраса ӳкнĕ. Венгри çар министрĕн вара сывлăшран тапăнассинчен хӳтĕлес ĕçе вăйлăлатас тĕлĕшпе çĕнĕ мерăсем йышăнатпăр тесе радио тăрăх ятарласа тухса каламалла пулнă. Анчах та вăл калани халăха лăплантарайман. Будапештра çакăнтан хăраççĕ: совет бомбардировщикĕсем Венгрие тапăнни пысăк тапхăра, Венгрин промышленноçлă районĕсем пĕр чарăнусăр Германи çарĕ валли ĕçлеме пултарнă тапхăра, пĕтерсе лартать пуль теççĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Англи хаçачĕсем çакна палăртаççĕ: совет авиацийĕ Будапешта тата Венгрин ытти районĕсене тапăннисем Венгрири халăхшăн кĕтмен çĕртен пулнă япала пулса тăнă. Рейтер агентствин шухăшĕпе, совет самолечĕсем Будапешт çине бомбăсем пăрахни пысăк результатсем пама пултарать. Венгри столицинче самолетсем тапăннă пирки пысăк сиен курнă йышлă çар завочĕсемсĕр пуçне тата кăнтăр-хĕвелтухăç районĕнчи халăха çăнăх парса тăракан армансем пур. Çавна пула Будапешта тапăнни çав районри халăха продовольстви парса тăрас ĕçшĕн татăлми пухăш-хăмăлĕшĕн сиенлĕ япала пулса тăма пултарать.

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçатăн Цюрихри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: совет авиацийĕ Будапешта тапăнни пурлăх тĕлĕшĕнчен пысăк сиен кӳнĕ. Малтанхи хут пырса тапăнничченех Венгри хаçачĕсем хăйсен умстатьисенче мĕнле сырнине пăхсан — венгерсем «тĕлĕнмелле çĕршывра» пурăннă пек туйăнатчĕ, Венгрия хăйне хирĕç пырса çаптармасăрах ытти государствăсемпе вăрçма пултарнă пек туйăнатчĕ.

«Спектейтор» журнал совет авиацийĕ Будапешта тапăнни çинчен çапла çырать: нимĕçсен юратнă вырăнне пырса çапнă, нимĕçсем Будапешта вуншар пинĕн куçса пыратчĕç, унта хăрушсăрлăхра ырă куратчĕç. Совет авиацийĕ тапăннисем Венгри правительсем Совет Союзĕпе вăрçă пуçласа Венгрия совет территорийĕнче çеç çапăçĕ тесе шутланине çĕмĕрсе пăрахрĕç. Будапешт тырă авăртакан промышленноçăн пысăк центрĕ пулса тăрать, тесе çырать журнал. Çавăнпа та вăл Германин продовольстви парса тăмалли системин чи хытă сиенлеме пултаракан вырăнĕ пулса тăрать. Будапешта провинцирен тырă авăртма яраççĕ. Будапешта ытти хуласенчен, çавăн пекех сиенлеме пултараканскерсене хӳтлĕхсĕр тăратса хăварса, зенитнăй артиллери яма тивет пулмалла, тет журнал.

## Будапештра сывлăшран тапăнассинчен хӳтĕлес ĕçсене саботаж тăваççĕ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Германин Трансоцеан агентстви пĕлтернĕ тăрăх, совет самолечĕсем пырса тапăннă хыççăн полици тĕттĕмлетмелли правилăсене пăснă темиçе çынна штраф тӳлеттернĕ, тытса хупнă. Çирĕп распоряженисем кăларнă пулин те, самолетсем тапăннă вăхăтра пур урамсенче те уçă та çутă чӳречесем курма пулнă. Правилăсене çавăн пек пăсни юри саботаж туни пулать тесе шухăшлас килет, тет агентство. Правилăсене çавăн пек пăсаканнисемпе кĕрешме çарпа полици вăйĕсемпе усă курма тивнĕ.

### АРГЕНТИНĂРИ ДЕПУТАТСЕН ПАЛАТИ ГИТЛЕРЛА ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ ХУПМА ХУШАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Аргентинăра гитлеровецсен шпионла организацийĕсене хупассишĕн пыракан обществăллă движени сарăлса пырать. Вĕсене 1939 çултах чарса лартнă пулнă. Анчах та вĕсем çĕнĕ ятсем йышăнса тата Аргентинăра пурăнакан нимĕçсемпе усă курса, халиччен сăтăрçăлла ĕçсем туса тăраççĕ.

Нумаях пулмасть депутатсен палати шалти ĕçсен министрне Кувясьяспие çав организацисене хирĕç мĕншĕн татăклă мерăсем йышăнманнине ăнлантарса пама хушнă.

### БОЛГАРИРЕ ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇЛЕ САБОТАЖ ТУНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германие хирĕçле саботажпа кĕрешме Болгарие гестапон çĕнĕ отрячĕсене янă. Нумаях пулмасть Румыни чиккинчен 30 мильăри Попово патĕнче чугунçул çинчи кĕпере сирпĕнтерсе янă.

### Англи бомбардировщикĕсем Шербура тапăнни

ЛОНДОН, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: сентябрĕн 15-мĕшĕнче бомбардировка тăвакан авиацин «Бостон» йышши самолечĕсем, истребительсемпе пĕрле пырса, Шербурти суднăсем çине бомбăсем пăрахнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах истребительсен ытти соединенийĕсем Çурçĕр Францие тапăннă. Войско авиацийĕн самолечĕсем Çурçĕр Франци çинче патрульлесе çӳренĕ вăхăтра вĕсем заводсене, чугунçул çинчи складсене тата ытти объектсене пулеметсемпе пенĕ. Англи авиацийĕ çав операцисенче çухатусем тӳсмен.

### США ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔН ÇУХАТĂВĔСЕМ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). США тинĕс министерстви çапла пĕлтернĕ: Америкăн тинĕс-çар флочĕ паянхи кун тĕлне пĕтĕмпе, вилнисене шутласан, 3698 çын çухатнă, кунсăр пуçне 943 çын аманнă тата 8.269 çын пĕр хыпарсăр çухалнă.

### Уилки Тегерана çитнĕ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Тегеранран пĕлтернĕ тăрăх, унта Уилки пырса çитнĕ.

### ИНДИРЕ ЗАКОНСЕМ КĂЛАРАКАН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ СОБРАНИН СЕССИЙĔ УÇĂЛНĂ

ДЕЛИ, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 14-мĕшĕнче Делире законсем кăларакан центральнăй собранин сессийĕ уçăлнă, сессире собранин 75 членне яхăн пур.

Темиçе çĕр студент çав сесси ĕçлекен çурт умĕнче демонстраци тунă. Студентсем собранин заседание каякан членĕсене çул пӳлме хăтланнă. Демонстрантсен ушкăнĕнчен «Собранио бойкотламалла!» тесе кăшкăрнă. Пырса çитнĕ полици демонстрацире пулнă темиçе студента арестленĕ.

* * *

Индире законсем кăларас власть законсем кăларакан органăн аллинче тăрать, çав орган икĕ палатăран—законсем кăларакан центральнăй собранирен тата государственнăй советран тăрать. Законсем кăларакан центральнăй собрание виçĕ çуллăха суйлаççĕ, унта 141 член: 162-шне суйлаççĕ, 39-шне власть лартать. Государственнăй совета 5 çуллăха суйлаççĕ, унта 58 член: 32-шне суйлаççĕ, 26-шне власть лартать.

Индире исполнительнăй власть правительство аллинче — вице-король çумĕнчи исполнительнăй совет аллинче тăрать. Исполнительнăй советăн пуçĕнче вице-король тăрать, вице-король Индири законсем кăларакан собранин кирек хăш постановленине те пăрахăçа кăларма пултарать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 24 п. н.